Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи А. Г. Николаев ячĕллĕ Калайкасси шкулĕ

# ХЫÇАЛТИ ПАРТА

interhypar@mail.ru

Кайри мала!

#3 /07/ 2007

Шкул ачисен хаçачĕ

Пушăн 22-мĕшĕ — акан 5-мĕшĕ

## НОМЕРТЕ:


Çатракассинче чи чăнкă каччăсем 2 стр.

«5» палăн хакĕ 4 стр.

*Сăмах дуэлĕ* Каччăсемпе хĕрсем 5 стр.

Чи тĕлĕнмелле куççем 8 стр.

Му-нарт 11 стр.


# ТАТЬЯНА ЕРШОВА: ЧИ ЛАЙĂХХИНЕ — АЧАСЕНЕ



Класс ертӳçин тавра курăмĕнчен шкул ачисен аталанăвĕ мĕнле пуласси те килет, ахальтен мар ĕнтĕ эпир ăна иккĕмĕш анне тетпĕр. Лайăх амăшĕн ачи-пăчи те туслă, лайăх вĕренеççĕ, тирпейлĕ, ĕçчен, килĕнче те таса, çутă. Савăнăçа та, хуйха та аннепе пайлама пулать, вăл сана яланах ăнланать, пулăшать, çитĕнӳсем тума хавхалантарать. Паян сире чи маттур та нумай ачаллă аннепе — Татьяна Аркадьевна Ершовăпа паллаштарăпăр. Вăл 10-мĕш спорт класăн ертӳçи.

**Интервью — 6-мĕш страницăра**

## АТАПАЙ ШКУЛĔНЧЕ ОБЩЕСТВĂЛЛА ЭКСПЕРТИЗА КУНĔ

**Пуш уйăхĕн 3-мĕшĕнче Атапай шкулĕнче обществăлла экспертиза кунне ирттерчĕç.**

Малтанах шкул ачисем экскурси ирттенчĕç, чĕннĕ хăнасене шкул пурнăçĕпе паллаштарчĕç. Кайран вĕрентекенсем уçă урок кăтартрĕç. Ачасем вĕрентекенпе пĕрле вырăс чĕлхи урокĕнче А.Платонов çырнă «Пллă мар чечек» юмаха тишкерчĕç. Урок теми «Пурнăçа пире юратма панă» ятлă пулчĕ. Ăна 2-мĕш категориллĕ вĕрентекен А.Иванова ирттерчĕ.

4-мĕш класра та «Аннерен хакли çук» уçă урок пулчĕ. Вĕренекенсем амăшĕсене мĕнле юратни çинчен сăвăлласа каларĕç, сочиненисем çырчĕç, юрăсем юрларĕç. Урока 1-мĕш категориллĕ вĕрентекен Светлана Вязова ертсе пычĕ.

8-мĕш класра вара «Килсурт таврашĕнчи электричество» ятлă урок иртрĕ. Ăна ирттерекенĕ - 1-мĕш категориллĕ вĕрентекен Юрий Скворцов пулчĕ.

Кайран йăлана кĕмен урок иртрĕ. 6-мĕшпе 7-мĕш класра вĕренекенсем чăваш йăлийĕркине, тĕррине, тумтирне тишкерессипе ăмăртрĕç. Ку урока 2-мĕш категориллĕ вĕрентекен М.Колбасова хатĕрленĕ.

Урокcем пурне те кăмăла кайни уçă урока итлеме хăнасем тухса калаçнинчен паллă пулчĕ. Вĕсем пурте уроксене пысăк хак парса вĕрентекенсене татах та нумай çитĕнӳсем тума сĕнчĕç. Шкул директорĕ Т.Вязова пухăннă çынсене Президент программине пурнăça кĕртес тесе шкул коллективĕ мĕнле ĕçлени çинчен доклад турĕ.

Район канашĕн депутачĕ В.Вязов, шкула тимлекенсен канашĕн ертӳçи Юрий Ковалев, вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Леонид Мочалов тата ашшĕ-амăшĕсем шкул ĕçĕпе кăмăллă пулнине палăртса хăварчĕç, коллектива малашне те ăнăçусем сунчĕç.

Юлашкинчен шкул ачисемпе вĕрентекенсем концерт лартса пачĕç. Анне çинчен савăнăçлă юрăсем шарантарчĕç, сăвăсем янратрĕç.

Кайран вара шкул е район шайĕнче иртнĕ ăмăртусенче хăйсен пултарулăхне кăтартакан ачасене чысларĕç. Вĕсен шутĕнче 7-мĕш класра вĕренекен Сергей Каламбаев та пулчĕ. Вăл районта иртнĕ наукăпа практика конференцийĕнче 3-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

Пухăннă çынсем обществăлла экспертиза кунĕсем кирлине палăртрĕç.

**Елена КОЛБАСОВА, 7 кл., Атапай шкулĕ**

## ÇИТЕС НОМЕРТЕ:



КАЛАЙКАССИНЧЕ МАТТУР ХĔРСЕМ ВĔРЕНЕÇÇĔ



ШПАРГАЛКА МУЗЕЙĔ